ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЁ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН КОНСТИТУЦИНЕ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН САККУНЁСЕНЕ ТАТА ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ЫТТИ ПРАВО АКЧЁСЕНЕ ПИЧЕТЛЕСЕ КĂЛАРМАЛЛИ ТАТА ВĂЯ КЁРТМЕЛЛИ ЙЁРКЕ ÇИНЧЕН" САККУНЁН 6 СТАТЙИНЕ УЛШĂНУ КЁРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашё
2024 çулхи пуш уйăхĕн 28-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин Конституцине, Чăваш Республикин саккунёсене тата Чăваш Республикин ытти право акчёсене пичетлесе кăлармалли тата вăя кёртмелли йёрке çинчен" 2014 çулхи çёртме уйăхĕн 30-мĕшĕнчи 40 №-лĕ саккунĕн (Чăваш Республикин Саккунёсен пуххи, 2014, 6 №; "Республика" хаçат, 2017, раштав уйăхĕн 27-мĕшĕ; 2019, авăн уйăхĕн 18-мĕшĕ; 2022, авăн уйăхĕн 28-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 28-мĕшĕ; 2023, раштав уйăхĕн 13-мĕшĕ) 6 статйин 4-мĕш пайне улшăну кёртес, ăна çакăн пек çырса хурас:

"4. Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн нормативлă пĕлтерёшлĕ йышăнăвĕсем, енчен те йышăнусемпе хăйсемпе вĕсем вăя кёресси çинчен урăхла йёрке палăртман пулсан, вĕсене официаллă йёркепе пичетлесе кăларнă кун хыççăн вунă кун иртсен вăя кёреççё.

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ытти йышăнăвĕсем, енчен те йышăнусемпе хăйсемпе вĕсем вăя кёресси çинчен урăхла йёрке палăртман пулсан, вĕсене çирёплетнё кунран пуçласа вăя кёреççё.".

2 статья

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ – О. Николаев

Шупашкар хулли
2024 çулхи пуш уйăхĕн 29-мĕшĕ
16 №